25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
9 МАЙ
26
ШАМАТКУН
100(6851) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, ĕçлеçĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔН ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар командующийĕсен ячĕпе Кремльте пулнă йышăну

Майăн 24-мĕшĕнче ССР Союзĕн Правительстви Кремльте Хĕрлĕ Çар командующийĕсен ячĕпе йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем, ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн представителĕсем, совет промышленноçĕн, наукин, искусствин, литературин паллă деятелĕсем пулнă.

20 сехет тĕлнелле хăнасем Кремльти Пысăк Дворецăн Георгиевски залне пухăнма пуçланă. Унта пирĕн мухтавлă çăран тата пирĕн паттăр халăхăн чи лайăх çыннисем пынă. Чапа тухнă Совет Союзĕн Маршалĕсемпе, фронтсен командующийĕсемпе, тăшмана аркатас тĕлĕшпе Сталинăн гениллĕ планне пурнăçа кĕртнĕскерсемпе юнашар, Социализмлă Ĕç Геройĕсене, Совет хĕçпăлăн паллă конструкторĕсене, хăйсен пултаруллă вăй-хăвачĕпе Хĕрлĕ Çара чи малта пыракан çар техники туса панăскерсене, курма пулать.

Çĕнтерӳ çинчен калакан хаваслă та хумхантаракан хыпар тĕнчене сарăлни икĕ эрне çеç иртрĕ. Майăн 9-мĕшĕнче Сталин юлташ совет халăхне Отечественнăй аслă вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленнĕ май çапла чĕнсе каларĕ: «Эпир хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тунă аслă жертвăсем, вăрçă пынă вăхăтра пирĕн халăх тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсемпе хĕнхурсем, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварас тесе тылра тата фронтра хĕрӳллĕн ĕçлени,—çаксем пурте ахаль пулмарĕç, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтернипе вĕçленчĕç».

Хĕрлĕ Çар тата союзниксен çарĕсем пырса çапнине пула, вăрă-хурахла гитлерла Германи ишĕлсе анчĕ. Пирĕн Çĕнтерӳ ялавĕ парăннă Берлин çийĕнче вĕлкĕшет. Тупăсем пеме чарăнчĕç, юнлă çапăçусем иртсе кайрĕç. Аслă Совет халăхĕ—çĕнтернĕ халăх—Çĕнтерӳ праçникне, пирĕн тĕрĕс ĕçĕн уявне, мухтавлăн палăртрĕ. Çак тĕрĕс ĕçшĕн пирĕн Тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсем фронтсенче çапăçрĕç, тылра тăрăшса ĕçлерĕç.

Паян авалхи Кремль тăшмана çĕнтернĕ çынсене кĕтсе илет. Вĕсем пурте—рядовой боецран пуçласа Маршала çитиех—аслă Сталин вĕрентсе хатĕрленĕ мухтавлă çынсем. Сталин вĕсене вăрçăн мĕнпур йывăрлăхĕсемпе тĕрĕслевĕсем витĕр ертсе тухрĕ, вĕсен ирĕклĕхне çирĕплетрĕ, вĕсене аслă çĕнтерӳ искусствине вĕрентрĕ. Хальхи вăрçăн аслă çапăçăвĕсенче пирĕн воинсем пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйсен пултарулăхĕпе паттăрлăхне кăтартса пачĕç. Немĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пынă хаяр кĕрешӳсенче вĕсене пирĕн аслă тăвансен—Александр Невскин, Димитрий Донскойăн, Кузьма Мининăн, Димитрий Пожаркин, Александр Суворован, Михаил Кутузован çăнарĕсем хавхалантарса пычĕç, вĕсене, пирĕн воин-уламсене, аслă Ленинăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ çутатса пычĕ.

Мĕнпур çĕршыв, мĕнпур совет халăхĕ хăйĕн полководецĕсемпе тата салтакĕсемпе тивĕçлипе мухтанма пултарать: вĕсем историре ку тараннчен пулман вăрçăра çĕнтерчĕç. Вĕсем пирĕн çĕршыв çине ку тараннчен килсе кĕнĕ тăшмансенчен чи вăйлине, чи чĕнине аркатса тăкрĕç. Тăван çĕршыв хăйĕн шанчăклă ывăлĕсен вăрçăри ĕçĕсене, çапăçури пултарулăхĕсене тивĕçлипе палăртрĕ—нумайĕшĕн кăкăрĕсем çинче орденсем йăлтăртатса тăрасçĕ. Вĕсем Мускав патĕнче, Сталинград патĕнче, Украинăпа Белоруссире хирĕсенче пулса иртнĕ аслă çапăçусем çинчен тăшман çĕрĕ çинче çĕнтерӳллĕн малалла пыни çинчен каласа парасçĕ.

Мухтав вĕсене, ирĕклĕх вăрçин геройĕсене, Ленинăн-Сталинăн аслă ялавне мĕнпур йывăрлăхсем витĕр мухтавлăн йăтса тухнăскерсене, вырăс хĕçпăлăлĕн çапăçури йăлисене йышлăлатнăскерсене, хăйсен паттăр ĕçĕсемпе пирĕн Тăван çĕршыв историйĕн мухтавлă çĕнĕ страницисене çырса хунăскерсене.

Пирĕн çĕнтерӳ вăл—фронтпа тыл пĕрлешсе ĕçленин результатĕ, Уралпа Çĕпĕрти хĕçпăлăн тăвакансен, Бакури нефть кăларакансен, Магнитогорскри металл шăрăтакансен, Кузбасри шахтерсен паттăр ĕçĕсен результатĕ. Пирĕн çĕнтерӳ вăл аслă совет çĕршывĕнчи мĕнпур халăхсен—Российăпа Украина ывăлĕсен, Белоруссипе Азербайджан ĕççыннийĕсен, Узбекистанпа Грузи работникĕсен, Ленинăн-Сталинăн аслă ялавĕ айĕнче тăванла пĕрлешнĕ мĕнпур наци ĕççыннийĕсен патриотла вăй-хăвачĕн ĕçĕ пулса тăрать.

20 сехет. Пухăнăмсем И. В. Сталин юлташ, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, А. А. Жданов, Н. С. Хрущев, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, А. И. Микоян, М. М. Шверник, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. А. Булганин, Н. А. Вознесенский юлташсем зала пырса кĕнине ура çинче тăрса, тăваллăн нумайччен алă çупса кĕтсе илеççĕ. Çĕнтерӳ тума хавхалантаракан тата çĕнтерӳве организацилекен Сталин юлташа тата унăн юлташсене хисеплесе, темиçе минут хушши хĕрӳллĕн алă çупаççĕ. Зал шăпланать. Молотов ю...аш Совет Союзĕн Маршалĕсене Президиума пырса ларма сĕнет. Зал Атăлтан пуçласа Шпрее шывĕ патне сиген. Мускав сывăхĕнчи хирсенчен пуçласа Берлин патне çити, Украннăран пуçласа Бранденбурга çити аслă походсене ертсе пынă мухтавлă полководецсене хĕрӳллĕн саламлать.

В. М. Молотов юлташ пухăннисене кĕске сăмах калать:

—Юлташсем, Правительство çак йышăнăва, социализм строительствин, наукăпа искусствăн паллă деятелĕсене хутшăнтарса, Хĕрлĕ Çар командующийĕсен ячĕпе турĕ. Правительствăн паянхи йышăнăвĕ Германи фашизмне хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçăн нумай фрончĕсенче пирĕн çарсене ертсе пынă полководецсен ячĕпе, пирĕн çĕршыва ирсĕр захватчиксенчен тасатса, пире çĕнтерӳ патне илсе пынăскерсен ячĕпе пулать (тăваллăн алă çупаççĕ). Çак кунсенче пирĕн пĕтĕм совет халăхĕ вăрçăн йывăр çулĕсенче пирĕн халăхăн никама пăхăнманлăхĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн тата телейĕшĕн кĕрешнĕ боецсемпе командирсем çине пăхать. Çак кунсенче пĕтĕм совет халăхĕ хăйĕн çĕнтерӳ тунă çарĕпе ăна ертсе пыраканнисем çине, вĕсен вăрçăри паттăр ĕçĕсĕмшĕн тивĕçлипе мухтанса тата боецсемпе командирсене пĕтĕм чун-чĕререн юратса пăхать. Паян пирĕн красноармеецсемпе çар морякĕсен ячĕпе, пирĕн офицерсен, генералсен, адмиралсемпе мухтавлă Маршалсен ячĕпе тата, чи малтанах, пирĕн кĕрешĕве ертсе пынă тата халĕ те ертсе пыраканĕн ячĕпе, пирĕн халăха историре ку тараннчен курман аслă çĕнтерӳ патне илсе пынăскерĕн ячĕпе, юратакан çулпуç аслă Сталин юлташ ячĕпе черкке çĕклемелле!

Пухăннисем пурте пĕр харăс ура çине тăрасçĕ те çулпуса, учителе тата полководеца хисеплесе хĕрӳллĕн алă çупаççĕ.

— Юлташсем,—тет малалла Молотов юлташ,—пирĕн çар пирĕн социализмлă государствăна тивĕçлĕ пулчĕ, Европăна Германи фашизмĕнчен ирĕке кăларас аслă миссие тивĕçлĕ пулчĕ.

Пирĕн çара, пирĕн мĕнпур совет халăхне пăхса çитĕнтернĕ пекех, большевиксен мухтавлă партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ пăхса çитĕнтернĕ. Пирĕн партие аслă ĕç туса пурăннă аслă шухăшлă çын, аслă Ленин тунă. Пирĕн партие халĕ çĕнтерӳ патĕнчен çĕнтерӳ патне аслă Сталин ертсе пырать. Эпĕ Ленинăн-Сталинăн аслă партийĕмĕн, пирĕн большевиксен партийĕн Центральный Комитечĕшĕн, хамăран тăван аслă Сталин сывлăхĕшĕн черкке çĕклетĕп!

Молотов юлташăн юлашки сăмахĕсене зал хĕрӳллĕн алă çупса, аслă Сталин ячĕпе, мухтавлă Хĕрлĕ Çар—çĕнтернĕ Хĕрлĕ Çар ячĕпе саламлă сăмахсем каласа кĕтсе илет.

В. М. Молотов юлташ хăнасене çапла калать:

— Юлташсем! Кунта Мускава парне пама пĕр эшелон çĕркăмăк илсе килнĕ Польша горнякĕсен делегацийĕ пур. Эпĕ демократиллĕ, Совет Союзĕпе туслă Польшăн, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи туслăхшăн, славян халăхĕсем хушшинчи тусăлăхшăн, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи туслăхшăн, славян халăхĕсем хушшинчи ĕмĕр пăсăлми туслăхĕн примерĕ пулмалласкершĕн черкке çĕкленĕ сĕнетĕп!

Польша горнякĕсен делегацийĕ, Президиум патне пырать, пухăннисем ăна ăшшăн саламлаççĕ. Сталин юлташ ячĕпе, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи туслăх ячĕпе калана саламлă сăмахсем илтĕнеççĕ. Польша делегацийĕ хăйсен тăван чĕлхипе Сталин юлташа хисеплесе сывлăх юрри юрласа парать.

Молотов юлташ «эпир пурте юратакан Михаил Иванович Калинин сывлăхĕшĕн, вырăс халăхĕн çав тери паллă представителĕн, большевикла Центральный Комитетăн питĕ ватă членĕн, Совет Государстви Пуçлăхĕн сывлăхĕшĕн» черкке çĕклет.

Пухăннисем Молотов юлташ сăмахне хĕрӳллĕн алă çупса йышăнаççĕ.

И. В. Сталин юлташ хăнасене çапла калать:

— Эпĕ пирĕн тулашри политикăна ертсе пыракан Вячеслав Михайлович Молотовшăн черкке çĕкленĕ сĕнетĕп. Тулашри лайăх политика тепĕр чухне фронтри ик-виç армирен хаклăрах тăнине ан манăр. Хамăран Вячеславшăн!

Молотов юлташа хисеплесе, зал хĕрӳллĕн алă çупать.

Молотов юлташ Хĕрлĕ Çар командующийĕсен ячĕпе черкке çĕклеме сĕнет.

— Манăн чи малтанах Жуков юлташăн ятне асăнас килет,—тет Молотов юлташ.—Жуков ячĕпе Мускава паттăрăн хӳтĕлени, Ленинграда хӳтĕлени, пирĕнпе туслă Польшăн столицине—Варшавăна ирĕке кăларни сыхăнса тăрать. Жуков Маршал ертсе пынипе пирĕн çарсем фашистсен шăтăкне—Берлина çĕмĕрсе кĕчĕç те унта Çĕнтерӳ ялавĕ тăратса лартрĕç. Жуков Маршалăн сывлăхĕшĕн!

Залра татах Хĕрлĕ Çарпа унăн полководецсене хисеплесе тăваллăн алă çупаççĕ.

Молотов юлташ Конев Маршалăн — Украинăри çапăçусен геройĕшĕн, Прагăна ирĕке кăларнăскершĕн, Жуков Маршалăн çарĕсемпе пĕрле Берлин хулине çĕмĕрсе кĕнĕ полководецшăн; Рокоссовский Маршалшăн—ку вăрçăра историлĕ улшăну пулса тăракан Сталинградри çапăçу геройĕшĕн, Белоруссири операцисене ертсе пынă, немĕçсене Данцигпа Штеттинран хăваласа кăларнă полководецшăн; немĕçсене Ленинград патĕнче аркатса тăкнă, Таллин хулине ирĕке кăларнă, тăшманăн Карели перешеекĕнчи вăйлă оборонине çĕмĕрсе Выборга ирĕке кăларнă Говоров Маршалшăн; Малиновский Маршалшăн — Ростова ирĕке кăларнă геройшăн, Венгри столицине—Будапешта немĕç тата венгер фашисчĕсенчен туртса илнĕ полководецшăн; Толбухин Маршалшăн—Болгарие тата унăн столицине—Софие ирĕке кăларнă геройшăн, немĕç захватчикĕсене Австри столицинчен — Венăран хăваласа кăларнăскершĕн; Василевский Маршалшăн — Хĕвелтухăç Пруссири çапăçусен геройĕшĕн, Прусси милитаризмĕн йăви пулса тăнă Кенигсберг хулине туртса илнĕскершĕн; немĕçсен Земланд çурутравĕнчи ушкăнне аркатса тăкнă армри генерал Багряманшăн; совет çарĕсен çĕнтерӳллĕ ĕçĕсене Çурçĕрте ертсе пынă Мерецков Маршалшăн; Карпат тăвĕсем урлă çĕнтерӳллĕ каçнă армри генерал Еременкăшăн черккесем çĕкленĕ сĕнет.

Хăнасем ура çине тăрасçĕ те совет хĕçпăлăне чапа кăларнă Сталинла мухтавлă полководецсене, Верховный Главнокомандованин заданийĕсене генилле пурнăçа кĕртнĕскерсене, хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Молотов юлташ Хĕрлĕ Çарăн ватă полководецĕсемшĕн, Хĕрлĕ Çара граждăн вăрçи çулĕсенче ертсе пырса, çамрăк совет государствине паттăрла сыхланăскерсемшĕн черкке çĕкленĕ сĕнет. Молотов юлташ совет çарĕсене граждăн вăрçи вăхăтĕнчех çĕнтерӳллĕ çапăçусенче ертсе пынă тата хальхи Отечественнăй вăрçа çулĕсенче те çарсене ертсе пынă К. Е. Ворошилов Маршалăн, Буденный Маршалăн тата Тимошенко Маршалăн сывлăхĕсемшĕн черкке çĕклет.

Совет Союзĕн Маршалĕсем, генералсем, социализмлă промышленность, наука, искусство тата литература деятелĕсем, ура çине тăрса, Хĕрлĕ Çарăн хисеплĕ полководецĕсене ăшшăн саламлаççĕ.

Юлашкинчен, Молотов юлташ Совет Союзĕн Тинĕс-Çар флотне ертсе пыракансене—флот адмиралĕсене Кузнецова тата Исакова, флотсен командующийĕсене Трибуп. Октябрьский, Головко, Юмашев адмиралсене, çавăн пекех Хĕрлĕ Çарăн спецциальнăй часĕсен Маршалĕсене те, артиллерин Главнăй Маршалĕнчен Вороновран тата авиацин Главнăй Маршалĕсенчен Новиковпа Голованован пуçласа, пурне те ятсенчен каласа тухса саламлать.

Унтан Оборонăн Государственный Комитечĕ ячĕпе, унăн председателĕ И. В. Сталин Маршал ячĕпе, Оборонăн Государственный Комитечĕн членĕсен ячĕпе, Хĕрлĕ Çара пур тĕрлĕ хĕçпăшал, танксем, самолетсем, боеприпассем тата-сыпписĕр парса тăнăскерсен, пур фронтсенче те çарсене пытти тĕрлĕ япаласемпе апат-çимĕç парса тăнăскерсен—Л. П. Берия, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, Л. М. Каганович, Н. А. Булганин, Н. А. Вознесенский юлташсен ячĕпе черккесем çĕклеççĕ. Ун хыççăн Генеральнăй Штабăн тата унăн начальникĕ—арми генералĕ Антонов юлташăн черкке çĕклеççĕ.

Аслă çулпуç тата полководец, партипе правительство руководителĕсен пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çарăн тата паттăр халăхăн пĕрле кĕрешсе мухтавлă çĕнтерӳ тунă представителĕсемпе пулнă çак историллĕ тĕлпулăвĕ туслă та кăмăллă иртнĕ.

И. В. Сталин юлташ тухса калани

Юлташсем, мана тата тепĕр, юлашки черкке çĕкленĕ ирĕк парăр.

Эпĕ хамăран совет халăхĕн, чи малтан, вырăс халăхĕн сывлăхĕшĕн черкке çĕклесшĕн. (ТАВАЛЛАН, НУМАЙЧЧЕН АЛĂ СУПАÇÇĔ, «УРРА» КАШКАРАÇÇĔ).

Эпĕ, чи малтан, вырăс халăхĕн сывлăхĕшĕн ĕçетĕп, мĕншĕн тесен вăл наци Совет Союзне кĕрекен мĕнпур нацисенчен чи палли пулса тăрать.

Эпĕ вырăс халăхĕн сывлăхĕшĕн черкке çĕклетĕп, мĕншĕн тесен çак вăрçăра ăна пурте пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсем хушшинче Совет Союзĕн ертсе пыракан вăйĕ вырăнне хурса йышăнчĕç.

Эпĕ вырăс халăхĕн сывлăхĕшĕн черкке çĕклетĕп, мĕншĕн тесен вăл—ертсе пыракан халăх кăна мар, кунпа пĕрлех унăн усăмлă ăс-тăн, çирĕп кăмăл тата чăтăмлăх пур.

Пирĕн Правительствăн йăнăшсем сахал мар пулчĕç, 1941—42 çулсенче ларутăру питех те хăрушланнă вăхăтсем пулчĕç; ун чухне пирĕн çар каялла чакса пычĕ, Украинăри, Белоруссири, Молдавири, Ленинград облаçĕнчи, Балтика тăрăхĕнчи, Карел-Финн республикинчи хамăран тăван ялсемпе хуласенчен туха-туха кайрĕ, мĕншĕн тесен урăхла тума май пулман. Пĕр-пĕр урăх халăх Правительствăна çапла каланă пулĕччĕ: эпир шанинине Эсир тӳрре кăлараймарăр, çирĕлĕр аяккалла; эпир урăх Правительство ларттатпăр, вăл Германипе мир тăвĕ те пире лăпкăн пурăнма май парĕ. Анчах вырăс халăхĕ ун пек тумарĕ, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн Правительствин политики тĕрĕссине ĕненсе тăнă; çавăнпа вара вăл, Германие çапса аркатас тесе, жертвăсем тума килĕшрĕ. Вырăс халăхĕ Совет Правительствине çаван пек шанса тăни вара историллĕ çĕнтерӳ тума, этемлĕх тăшманне—фашизма çĕнтерме май паракан татăклă вăй пулса тăчĕ.

Спаçипă ăна, вырăс халăхне, çаван пек шанса тăнăшăн!

Вырăс халăхĕн сывлăхĕшĕн! (ТАВАЛЛАН, НУМАЙЧЧЕН АЛĂ СУПАÇÇĔ).

* * *

Йышăну вăхăтĕнче хăнасене пысăк концерт кăтартнă, концерта столицăри чи лайăх артистсем хутшăннă. (ТАСС).

Чăваш республикинчи колхозсенче çĕртме тăвасси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: çĕртме сухине вăхăтра, хуни ăна лайăх сухалани тата çĕртме пуссисене лайăх пăхса усрани, удобренисемпе пĕтĕмпех тата тĕрĕс усă курни 1946 çулта кĕрхи тырăсен тухăçлăхне ӳстермелли татăклă условисем пулса тăрассĕ.

Республикăри малта пыракан колхозсем çĕртме сухине иртерех тата лайăх сухалама тăрăшаççĕ, çĕртме пуссисене вăхăтра тата тĕплĕн пăхса усрассĕ, çапла вара çулсеренех кĕрхи тырăсене пысăк тухăçлăхпа туса илеççĕ.

Анчах та Куйбышев, Улатăр, Чкаловски, Шăмăрша тата ытти хăмпĕр районсенчи нумай колхозсен руководителĕсем 1944 çулта çĕртме сухине иртерех сухалас ĕçе тивĕçлипе хакламарĕç, çĕртме сухи тăвас ĕçе кĕрхи тырăсем акас вăхăт çитичченех тăсса пычĕç, çĕртме пуссисене кирлĕ пек пăхса усрамарĕç, кĕрхи тырăсем аннăлли вырăна удобренисем тăкас ĕç çинĕ çителĕклĕ çаврăнса пăхмарĕç, çавна пула 1945 çулта вăйлă тухăçлă кĕрхи тырăсем туса илме çителĕклĕ условисем туса хăвараймарĕç.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ районсенчи совет, парти тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсемпе колхозсен председателĕсене, кĕрхи культурăсем акма çĕртме пуссисене вăхăтра хатĕрлес ĕç-хĕлне çулта пулнă пăнăсемпе тепĕр хут тумалла мар тесе, хăрахтарассĕ.

Çĕртме пуссисене вăхăтра сухалас тата кайран вĕсене агротехника енĕпе тĕрĕс пăхса усрамалла тăвас шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Районисполкомсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-сен директорĕсене тата колхоз председателĕсене çапла тума хушас:

а) тракторсемпе лашасем çуракинчен пушанса пынă май, вĕсене çийĕнчех çĕртме сухи тума тата тислĕк туртгарма куçармалла;

б) колхозсемпе колхозниксен килĕсенче пухăннă мĕнпур тислĕкпе торфа çĕртме тумалли хире кăларса тăкмалла, пуринчен малтан, 1946 çулта нумай çул ӳсекен пурăнăçлă акмалли хура çĕртме участокĕсене тата викăна сĕлĕ акăнакан çĕртме участокĕсене кăлармалла, вăл участоксенче хуташ акнă викăпа сĕлле пухса илнĕ хыççăн çийĕнчех удобренисене сухаласа витсе хăвармалла;

в) хура çĕртме сухине июлĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр сухаласа пĕтермелле, ăна таса тата кăпка тытса усрамалла, çумкурăксем шăтнă май тата тăпран çнелти сийĕ хытса кайнă май, хура çĕртме пуссине культиваци туса çемçетмелле;

г) тĕрлĕ тырпул акнă çĕртме пуссисене çак вăхăтсенче сухалама: клевер акнисене—июлĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр, викăпа сĕлĕ акнисене — июлĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр сухаламалла;

д) çĕртме пуссисене тракторсемпе 18 сантиметр тарăнăш, лаша плугĕсемпе 16 сантиметр тарăнăш сухаламалла; сухаланă хыççăн çийĕнчех сӳрелесе пымалла;

е) ĕç тухăçлăхне хăпартас тата унăн пахалăхне лайăхлатас шутпа, çĕртме тунă çĕрте уйрăм сделъщинăпа ĕçлессине анлăн сармалла;

ж) çĕртме сухине мĕнле пахалăхпа сухаланине тăтăмах тĕрĕслесе тăмалла, палăртса панă кашни кунхи ĕç нормисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тĕрĕслесе тăмалла, кашни колхозрах çĕртме сухин пахалăхне колхоз председателĕ, бригадирсемпе тата пахалăх инспекторĕсемпе пĕрле, тĕрĕслесе йышăнмалла тăвас пулать.

Колхоз председателĕсене МТС трактористĕсемпе, çаван пекех тата лашасемпе начар сухаланă участоксене йышăнма чарас, брак тунипе килĕшсе айăпа кĕрекенсене ответ тыттармалла тăвас.

2. МТС директорĕсене мĕнпур предприятисене халех юсама тата вĕсемпе çĕртме тунă çĕрте усă курма хушас.

3. Çĕртме тумалли пилĕккунлăх заданисене районсем тăрăх палăртса çирĕплетес. Райисполкомсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене тата МТС-сен директорĕсене колхозсемпе бригадăсем патне виçĕ кунлă срокра пилĕккунлăх заданисем çитерсе пама хушас.

4. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕпе Широв юлташа çĕртме тăвас, тислĕк кăларас тата çĕртме пуссисене малăнне пăхса усрас ĕçсем мĕнле пулса пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăма хушас.

ВКП(б) Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чурачăк районĕнчи, Шупашкарпа Канаш хулисенчи финанс активне премилесси çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарас ĕçре Чурачăк районĕ, Шупашкарпа Канаш хулисем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çĕнĕ заема Чурачăк районĕнче 2.938.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, заем укçине майăн 23-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пухса çитернĕ.

Шупашкар хулинче—10.853.000 тенкĕлĕх (бюджетпа пăхнинчен 1.718.000 тенкĕ нумайрах) сарнă. Хула территорине кĕрекен колхозсемпе колхозниксем заем укçине малтанхи кунах тӳлесе тăтнă.

Канаш хулинче заема 5.776.000 тенкĕлĕх (бюджетпа пăхнинчен 876.000 тенкĕ ытларах) вырнаçтарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне сарас тĕлĕшпе активлă ĕçленĕ работниксене премилеме Чурачăк райсовечĕн исполкомне — 10 пин тенкĕ, Шупашкар хули Совечĕн исполкомне—7 пин тенкĕ тата Канаш хула Совечĕн исполкомне—5 пин тенкĕ панă.

Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарне И. Золотников юлташа, ялсенче заем укçине пĕтĕмпех пухса çитернĕ май, ытти районсене те преми пама тăратма хушнă.

Çулйĕр строительствинчи çирĕмкунлăх

Сезона начар хатĕрленнĕ

СĔНТĔР. Кунта район центрне юсаса йĕркелесси çителĕксĕр пырать. Мăн Сĕнтĕрти учрежденисен сурчĕсене, тротуарсене, кĕперсене юсама та тытăнман. Тĕп урамри тротуар çĕрсе кайнă, вырăнвырăнăн хăмисем те çук. Пекарня патне çуран кăсмалли кĕпер кĕç-вĕç йăтăнса анас пек ларать.

Районра кăçалхи çулйĕр строительствин сезонне начар хатĕрленнĕ. Йывăç, чул тата хăйăр хатĕрлесе туртгармалли плана пурнăçа кĕртмен. План тăрăх 640 кубометр чул хатĕрлемелле пулнă. Вăл шутран ку тараннчен 30 кубометрне çеç туртгарса тухнă. Хăйăр вара пачах та хатĕрлемен. Йывăç материалсем хатĕрлесе турттарассине те начар ĕçленĕ.

Районри чылай çулсем япăхса кайнă. Район центрĕнчи çулсем те пăсăлса пĕтнĕ. Кăçалхи çуркунне 15 кĕпер юсамалла пулнă. Анчах та ку тарăнччен пĕр кĕпер те юсаман.

Çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне сĕнтĕрсен уйрăмах тимлĕн хутшăнмалла. Çирĕмкунлăх вăхăтĕнче районри колхозсенчен Горькипе Хусан хушшинчи мăн çул çинче кунсерен 180 çын çуран, 96 çын лавпа ĕçлемелле. Район руководителĕсен задачи—çакăн чухлĕ ĕç вăйне пĕтĕмпех ĕçе кăларасси, планпа палăртнă ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртесси пулать.

(Хамăр корр.).

КĔПЕРСЕНЕ ЮСАС ПУЛАТ

ЙĔПРЕÇ. Пысăк Упакасси ялĕ Вăрнарпа Йĕпреç çулĕ çинче ларать. Ял варринчи çырма яла икĕ пая уйăрать. Çав çырма урлă икĕ кĕпер пур. Анчах та вĕсем ячĕмĕн кăна. Вĕсем урлă машинăсемпе мар, лавпа, каçма та хăрушă.

Райсовет исполкомĕн çулйĕр пайĕ хушнă тăрăх, Упакасси ял Совечĕн çак кĕперсене иртнĕ çултах юсамалла пулнă. Чăпах та иртнĕ çул кăштах ĕçе тытăнăчĕ: йывăç кӳрсе килнĕччĕ, хăма çурнăччĕ. Анчах кĕперсене юсасси çăкăнпа чарăнса ларчĕ. Халĕ кĕпер хăмисем çĕрсе шăтса пĕтнĕ. Ял Совет председателĕ М. Яргеев юлташ пĕлтĕр тытăннă ĕçе кăçал та вĕçлемест.

Çак ял Советĕнчи «Путиловка» колхозăн кĕперĕ те юрăхсăра тухнă. Вăрман промхозăн автомашина çулĕ çинчи кĕпersем те шăтса пĕтнĕ. Савна пула «Освобождение» колхоз лаши кунта урине амантнă.

Республикăра çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхĕ пуçланчĕ. Çак çирĕмкунлăхра çулте асăннă кĕперсене те юсамалла.

Ёçсынни депутачĕсем Куславкка район овечĕн исполкомĕ тата ВКП(б) райкомĕ тăратнă тăрăх, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă çак майта пыракан колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ сине кĕртнĕ:

1. **«Путь Маркса» колхоз** (председателĕ **Морозов** юлташ, ферма заведующийĕ **Органкина** юлташ). Колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра вылăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 153 процент, сурăхсем енĕпе 120 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 100 процент тултарнă.

Государствăна обязательство тăрăх аш-какай памалли плана 72 процент, çăмарта—100 процент, сĕт—48 процент пурнăçланă. Обществăллă вылăхсем самăрлăх енчен лайăх.

2. **«Первое мая» колхоз** (председателĕ **Белкин** юлташ, ферма заведующийĕ **Горчихин** юлташ). Колхоз лашасем ĕрчетмелли государство планне 100 процент тултарнă, 15 кĕсререн 14 тиха илнĕ. Майракаллă шултăра вылăхсем енĕпе плана 113 процент, сыснасем енĕпе 165 процент, сурăхсем енĕпе 120 процент, какай-кĕшĕк енĕпе 100 процент тултарнă. Государствăна обязательство тăрăх сĕт памалли плана 70 процент, аш-какай—62 процент тултарнă.

3. **«Новая жизнь» колхоз** (председателĕ **Обриванов** юлташ, ферма заведующийĕ **Шигарева** юлташ). Колхоз государство планне лашасем енĕпе 100 процент, майракаллă шултăра вылăхсем енĕпе 112 процент, сыснасем енĕпе 126 процент, сурăхсем енĕпе 134 процент тултарнă. Государствăна аш-какай памалли плана 100 процент, сĕт памалли плана 94 процент пурнăçланă. Обществăллă вылăх-чĕрлĕхрен илнĕ çамрăк вылăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă.

4. **Жданов ячĕпе** тăракан колхоз (председателĕ **Николаев** юлташ, ферма заведующийĕ **Мясников** юлташ). Колхоз лашасене тата продуктивлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ирттерсе тултарнă, çамрăк вылăхсене пурне те сыхласа хăварнă. Государствăна обязательство тăрăх сĕт 40 процент, аш-какай 54 процент панă.

5. **«Красноармеец» колхоз** (председателĕ **Данилов** юлташ, ферма заведующийĕ **Каменев** юлташ) Колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра вылăхсем енĕпе 116 процент, сыснасем енĕпе 162 процент, сурăхсем енĕпе 117 процент, кайăк-кĕшĕк енĕпе 116 процент тултарнă. Государствăна обязательство тăрăх сĕт 100 процент, аш-какай 87 процент, çăмарта 86 процент панă. Çамрăк вылăхсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă.

6. **«Спартак» колхоз** (председателĕ **Шипов** юлташ, ферма заведующийĕ **Кудряшова** юлташ). Колхоз лаша ĕрчетмелли плана пĕтĕмпех тултарнă. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне майракаллă шултăра вылăхсем енĕпе 110 процент, сыснасем енĕпе 140 процент, сурăхсем енĕпе 127 процент тата кайăк-кĕшĕксем енĕпе 102 процент тултарнă. Государствăна çамарта памалли плана 73 процент тултарнă.

* * *

Редакцирен: ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, «Чăваш Коммуни» хаçат редакцийĕ паянтан пуçласа, ёçсынни депутачĕсен районовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес енĕпе малта пыракан колхозсене республикăри Хисеп хăми сине кĕртме тытăнать.

Малта пыракан колхоз ферминче

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе те малта пырать.

Кунта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пур вылăхсем енĕпе те ытлашшипех тултарнă. Колхозăн план тăрăх майракаллă шултăра вылăхсем 140 пуç, сурăхсем 210 пуç, сыснасем 120 пуç пулмалла пулсан, планăн куна 153 пуç майракаллă шултăра вылăх, 282 сурăх, 284 сысна шутланать.

Колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ, 97 сурăхран 121 путек, 30 сысна аманчен 218 çурă илнĕ.

Çакăн пек çитĕнӳсем тăвасси, паллах, ферма заведующийĕ Андрей Плотников юлташ лайăх ĕçленинчен килет. Вылăхсем валли пур тĕрлĕ апат та çителĕклĕ, çуртăйĕрсем те лайăх. Вылăх-чĕрлĕх ферми колхоза нумай усă парать. Колхоз 1945 çулта государствăна памалли какайпа сĕт-çу планне иртнĕ çултах пурнăçларĕ, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 7 ĕне, 8 сурăх, 18 сысна ярса пачĕ.

Ку тĕлĕшпе фермăра ĕçлекенсем хăйсен стахановла ĕçĕсемпе уйрăмах чапа тухрĕç. Акă, Федосия Самакова доярка иртнĕ çулта 10 ĕнерен планпа 12.600 литр сĕт суса илес вырăнне 14.238 литр суса илнĕ. Çавăнтăн ăна ĕçкунĕсем çумне 246 литр сĕт хушса тӳленĕ. Пăру пăхакан Мария Петрова хăй ĕçне тăрăшса тăвать, витене таса тытса, хăй пăхакан 26 пăрува вăхăтра апатлантарать.

Фермăра примерлă колхозницăсем нумай. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн туса пырса колхозра вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла яма тăрăшаççĕ.

М. ЕГОРОВ.

РАЙОН ЦЕНТРНЕ ИЛЕМЛЕТЕÇÇĔ

ЙĔПРЕÇ. Кунти ĕçсынни сем, Чăваш республики 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, район центрне юсаса илемлетеççĕ. Поселок Совечĕ ертсе пынипе халĕ урамсенчи тротуарсене юсаççĕ, стадион тавра, клуб умне картасем тытаççĕ. Унсăр пуçне чылай учреждениесен коллективĕсем хăйсен çурчĕсем умне йывăççем лартаççĕ.

П. КУРАКОВ.

ЛЮПИН КУРĂКĔН УССИ ТАТА ĂНА АКСА ТĂВАССИ

Люпин курăкĕ тăпрана сĕмçетни тата вăл тырă тухăçлăхне хăпартни пурин. шĕн те паллă. Вăл агротехника енчен тата выльăх апачĕшĕн те питĕ паха. Анчах люпин пирĕн республикăра ытла та çителĕксĕр саралнă. 1940 çулта пирĕн колхозсем пурĕ те 109 гектар кăна люпин акнăччĕ. Çак шутран 46 гектарне ешĕл удобрени валли, 63 гектар вăрлăх валли акнă. Люпин курăкĕ пур вырăнта та йышлă çитĕнчĕ, вăрлăхлăх хăварнă курăкăн тухăçĕ ытла та сахал пулчĕ. 1941 çулта люпинпа 6 районри уйрăм колхозсем акнă. Ун лаптăкĕ пĕтĕмпе те 64 гектар кăна пулнă, вĕсенчен 14 гектарне ешĕл удобрени валли, 50 гектарне вăрлăх валли акнă. 1941 çулта та вăрлăх туса илме май пулмарĕ. Çавна пула 1942 çулта люпин акпă лаптăк пурĕ те 15 гектар кăна пулнă. 1943 çулта вара, люпин вăрлăхĕ пулман пирки, пачах акман. Люпин пирĕн республикăри колхозсемшĕн, уйрăмăнах Сăрă шывĕ хĕрринчисемшĕн, пысăк выраăн йышăнать. Иртнĕ çулсенче çак культура ăнăçлă пулманни, чăн малтанах, республика тулашĕнчен илсе килнĕ вăрлăхсене акниничен тата çак культурăн агротехникине пăхăнса ĕçлеменниничен килнĕ. Çав вăхăтрах пирĕн колхозсен çĕрĕсем çинче ӳссе çитĕнме пултаракан вăрлăх суйласа илни, вăрлăхне яровизацилесе, тасатса, вăхăтра акни тата ытти агромероприятисене пурнăçласа пыни люпин тухăçлăхне ӳстерме пулăшать.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн çĕрĕç кафедри хăйĕн умне люпин вăрлăхне суйласа илес, Чăваш республикинче люпин вăрлăхне тума май паракан ыйтусене тата парас задача лартрĕ. Çак зада. чăна пурнăçласан, люпин акса тăпрана çемçетмелли тата тырă тухăçлăхне ӳстермелли ыйтусенчен пĕрне ăнăçлă татса пама пулать. 1943 çулта ялхуçалăх институчĕн хуçалăхĕнче тĕрлĕ тăпра çинче люпин акса çитĕнтерес тĕлĕшпе чылай опытсем тунă. Сăнаса пăхма тĕкĕм-симĕс тата хĕрлĕ тĕслĕ «Золотой» сортлă люпина илнĕ. Тăпрана плугпа 20 сантиметр тарăнăш сухаланă, хыççăнах сĕресе якатнă. Икĕ сортне те майăн 23-мĕшĕнче ретлĕ сеялкăпа 4—5 сантиметр тарăнăш акнă. Люпин пĕр харăс шăтнă. Пухасса вара пиçсе çитнĕ май сентябрĕн 15-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче пухса илнĕ. Опытăн результачĕсем çакăн пек пулчĕç: «Золотой» сортлă хĕрлĕ люпин, каярах юлса акнă пулсан та, çанталăк условийĕсем 1943 çулта паха пулман пулин те, ешĕл курăк кăна мар, пиçсе çитнĕ, юрăхлă вăрлăхсем те чылай пачĕ. Тĕкĕм-симĕс тĕсли ешĕл курăк çителĕклĕ пачĕ, анчах вăрлăхĕ пиçсе çитеймерĕ.

1944 çулта люпинăн тĕрлĕ сорчĕсемпе чылай опытсем турăмăр. Акасса 1943 çулта пухса илнĕ вăрлăхпа Вăрмар, Ишлей тата Шупашкар районĕсенче акнă. Агротехника 1943 çулти пекех пулнă. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз хĕрлĕ люпин вăрлăхне гектарран 12,5 центнер, тĕкĕм-симĕс люпин вăрлăхне 3,5 центнер пухса илчĕ. Çак вăрлăхпа «Дружба» колхоз кăçал та люпин акса хăварать. Ялхуçалăх институчĕн Шупашкар районĕнчи опытлă участокĕ çинче 1944 çулта хĕрлĕ люпин вăрлăхне 13,5 центнер пухса илнĕ, тĕкĕм-симĕс люпинăн вăрлăхĕ ĕлкĕреймерĕ. «Дружба» колхоз кăçал вăрлăхлăх кăна мар, люпинăн ешĕл калчипе удобрени вырăнне çĕре çемçетме те акать.

Икĕ çул хушшинче тунă опытсем çакна çирĕплетсе параççĕ. Пирĕн Чăваш республикинче те «Золотой» сортлă хĕрлĕ люпина акса илме пулать.

Доцент Т. КРУЖИЛИН.

Сан-Францискăри конференцире Трумэн тухса каласси

ВАШИНГТОН, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳрлĕ Штатсен государство секретарĕ Стеттиниус пресс-конференцире çапла каланă: Трумэн Сан-Францискăри конференцин юлашки лараввĕнче сăмах тухса каламашкăн Сан-Францискăна пыма килĕшрĕ, тенĕ. Стеттиниус сăмахĕ тăрăх, вăл майăн 23-мĕшĕнче ирхине Трумэнпа канашланă. Трумэн çапла шантарса каланă: конференци хăйĕн ĕсĕне июнĕн пуçламĕшĕнче ăнăçлă пĕтерĕ, тенĕ, анчах конференци хăш кун пĕтессине кăтартса паман.

К. В. КИСЕЛЕВ ЮЛТАШ САН-ФРАНЦИСКĂРИ ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ ТУХСА КАЛАНИ

САН-ФРАНЦИСКО, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕрлешнĕ написен конференцинче кайнă Белорусси делегацийĕн председателĕ К. В. Киселев юлташ майăн 23-мĕшĕнче Сан-Францискăра пресс-конференцире Белоруссен Советла Социализмлă Республики çинчен каласа панă. Ун хыççăн вăл корреспондентсен ыйтăвĕсем сине ответсем панă.

«ДЕНИЦ ПРАВИТЕЛЬСТВИН» ЧЛЕНĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНРЕХ КАЛАСА КĂТАРТНИ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх Деница гросс-адмирала, çавăн пекех тата Германи правительствин текенскерĕн мĕн пур членĕсене тата нимĕçсен верховнăй командованийĕн членĕсене союзниксен çарĕсем Фленсбург хулинче тытăнса илнĕ. Англи çарĕсем Фленсбург хулинче çавăн пекех тата нимĕçсен 420 аслă офицерне яхăн тата 5.000 кĕçĕн офицерĕпе салтакне арестленĕ. Деницăр пуçне, нимĕçсен генеральнăй штаб начальникĕ пулнă Йодль генерал-полковника, ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Шверин фон Крозик графа, хĕçпăшал министрне Шпеера тата ытти сене те арестленĕ. Германи флочĕн главнокомандующийĕ Фридебург адмирал хăйне хăй вĕлернĕ.

БЕРЛИН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Англипе Америка командованийĕн тата совет главнокомандованийĕн представителĕсем пĕр-пĕринпе каласса татăлнă тăрăх, çак çулхи майăн 23-мĕшĕнче Фленсбург хулинче Деница гросс-адмирала тата Деница правительстви текенскерĕн членĕсене, çавăн пекех тата Йодль генерал-полковника (нимĕçсен верховнăй командованийĕн штабĕн начальникне), Фридебург адмирала тата ытти генералсемпе офицерсене те арестленĕ. Деница «правительствине» тата нимĕçсен штабне салатса янă чухне Америка командованийĕн представителĕ Рукс генерал-майор председатель пулнă, унпа пĕрле совет командованийĕн представителĕ Трусов генерал-майор тата Англи командованийĕн представителĕ Форд генерал-майор пулнă.

ШТРЕЙХЕР ГИТЛЕРОВЕЦА ТЫТСА ХУПНĂ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: американецсен 7-мĕш армийĕн часĕсем Берхтесгаден хули çывăхĕнчи пĕр пĕчĕк ялта Юлиус Штрейхер гитлеровеца тытса хупнă. Çак Штрейхер еврейсене кунçул паман, вĕсене хĕсес ĕçпе «чапа тухнă».

ГИММЛЕР НАРКĂМĂШ ÇАТСА ВИЛНĔ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин акăлчансен 2-мĕш армийĕн штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян кăсхине официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: гестапо пуçлăхĕ Генрих Гиммлер хăйне хăй вилнĕ.

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин акăлчансен 2-мĕш армийĕн штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Гиммлера акăлчансен 2-мĕш армийĕн часĕсем майăн 21-мĕшĕнче арестленĕ те майăн 22-мĕшĕнче фронтри хăрушсăрлăх органĕсен аллине панă. Союзниксен аллине лекес умĕн вăл урăх ятпа çӳренĕ, урăх тум тăхăннă, хăрах куçне хура тутăрпа сыхса лартнă, уссине хырнă пулнă. Майăн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле медицина енчен пăхнă чухне вăл çăварĕнче пулнă наркăмăш тултарнă кĕленчене шăлĕсемпе сыртса ватнă та 15 минутран вилсе кайнă.

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕРЧĔСЕМ НИМĔÇСЕМ ÇАРАТНĂ ПУРЛĂХА ШЫРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Уолл стрит Джорнэл» хаçатăн коррес. понденчĕ Парижран çапла пĕлтерет: халĕ союзниксен çарти тата гражданла экспертĕсем нумайĕшĕ Германи картелĕсем ытти государствăсенчи фирмăсемпе мĕнле сыхăнса тăнине тĕпченĕççĕ. «И. Г. Фарбениндустри» концернĕн Франкфурт хулин. чи правленийĕнче 200 тоннăна яхăн документсем тупнă. Çав документсем хушшинче «И. Г. Фарбениндустри» ытти государствăсенчи фирмăсемпе тунă килĕшӳсем пур. Союзниксем тата ытти вырăнсенче те нумай тĕлте гитлеровецсем пытарнă документсене тупнă. Çав документсем нимĕçсен пысăк фирмисем нацистсен партийĕпе çыхăнса тăнине кăтартса параççĕ.

Союзниксем çавăн пекех тата нимĕçсем çаратса пытарса хунă хаклă япаласене, ыттăн тата металл укçасем тупнă. Пĕр банкра 35 михĕ ыттăн укçа тупнă. Çав укçана банкра Гиммлер валли сыхласа тăнă пулмалла.

Лăпкă океан çинчи вăрçа

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Миндинао утравĕн вăтаçĕрти пайĕнче Америка çарĕсем 10 миля малалла кайнă. Америка самолечĕсем Формоза утравĕ çине, çавăн пекех тата японецсен Шанхайри, Кантонри тата Франци Индо-Китайĕнчи сооруженийĕсем çине бомбăсем тунă пирки.

ВАШИНГТОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен бомбардировка тăвакан авиацийĕн 20-мĕш соединенийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: майăн 24-мĕшĕнче американецсен хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсен питех те пысăк вăйĕсем Токио сине вут тивертсе яракан бомбăсем нумай пăрахнă.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ ХĂÇАН СУЙЛАССИ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин политикăллă ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла пĕлтерет: Англи парламентне 640 депутат суйламалла, унта суйлама мĕн пурĕ 2.000 кандидата яхăн тăратнă. Консерваторсен партийĕ 500 кандидат ытла тăратнă, лейбористсен партийĕ 500 кандидата яхăн, либералсем 300 кандидата яхăн.

Рейтер агентствин çав сотрудникĕ каланă тăрăх, суйлавсем июлĕн 5-мĕшĕнче е 11-мĕшĕнче пулса иртмелле.

АНГЛИ ПАРЛАМЕНТНЕ ИЮНЕН 15-МĔШĔНЧЕ САЛАТСА ЯРАÇÇЕ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи премьер-министрĕн резиденцийĕ çапла пĕлтернĕ: Англи парламентне июнĕн 15-мĕшĕнче салатса ямалла, тенĕ.

ИТАЛИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ТАТА КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔСЕМ ПĔРЛЕ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

РИМ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Миланра социалистсен тата коммунистсен партийĕсене ертсе пыракансен пĕрлехи ларрăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Пенци тата Тольятти председатель пулса ертсе пынă. Лару хыççăн çапла пĕлтернĕ: «Ларура çакă паларчĕ: коммунистсен партийĕ, декабрь уйăхĕнче вăрçă вăхăтĕнчи хăйне уйрăм лару-тăрăва кура правительствăна социалистсен партийĕсĕр кĕмс килĕшнĕскер, халĕ текех çавнашкал лару-тăру çук тесе шутлать. Министр-коммунистсем халĕ Ирĕклĕх комитетĕнче правительствăри кризиса килĕшӳллĕ татса памалли майсене тупман пирки кăна правительствăран тухмасăр тăраççĕ. Социалистсен тата коммунистсен партийĕсем çапла йышăннă: халăха килĕшӳллĕ политика тытса пыракан правительство хăвăртрах туса хурас ĕçре кансĕрлеме пултаракан чăрмавсене малашне икĕ партин пĕрле тăрăшыв сине кăларса пымалла. Çав чăрмавсене нацин ирĕклĕхĕн органĕсем пулса тăракан Ирĕклĕх комитечĕсем пулăшнипе татса памалла. Çак комитетсен правительствăна пулăшса пымалла тата правительствăна мĕншĕн халăх массисем пулăшмалла тумалла».

ФРАНЦИРИ ЗАБАСТОВКАСЕМ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 23-мĕшĕнче ирхине Сент-Этьенри (Луара департаменчĕ) рабочисем ĕçлеме пăрахнă та митинга пухăннă. Хăшпĕр ораторсем ĕçукçи ӳстерме, снабжение лайăхлатма тата Хирĕç тăрса кĕрешекен советăн программисене халех пурнăçа кĕртме ыйтнă. Унтан демонстраци пулнă, демонстрацие 35.000 çынна яхăн хутшăннă. Йĕркелĕхе ниçта та пăсман. Профсоюз делегацийĕсем префектурăна хăйсен требованийĕ списокне пама кайнă. Кафесене хупнă. Трамвайсем çӳремен. Профсоюз делегацийĕсем Парижа тухса кайсанах рабочисем ĕçе тытăнмалла. Делегацисене Парижра тивĕçлĕ министрсем йышăнмалла.

АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Роанра тата унăн таврашĕнче рабочисем, Луара департаментĕнчи профсоюзсен пĕрлешĕвĕн пуçарăвĕпе, забастовка пуçласа янă. Демонстрацие хутшăннă 10.000 çын ратуша тата профектура çурчĕсем патне кайнă. Делегатсем мэра тата суб-префекта хăйсен требованийĕсене панă. Çав требованисенче пурин чĕлăрах ĕçукçине йĕркелесси çинчен тата Хирĕç тăрса кĕрешекен советăн программисене пурнăçа кĕртесси çинчен калана. Немĕнле хирĕç таврашĕ те пулман.

ПАРИЖ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Париж районĕнчи служащисен профсоюз палати организацилене пухура Ĕçĕн Пĕтĕмпĕлте Конфедерацийĕн секретарĕ Альбер Газье çапла каланă: ĕç министрĕпе Пародине каласăни служащисен пурнăçне чылаях лайăхлатрĕ. Çавна пула служащисен профсоюзĕсен федерацийĕн генеральнăй секретарĕ радио тăрăх забастовкăна пĕтерсе, служащисене ĕçе тытăнма чĕннĕ.

ФРАНЦИПЕ ЮГОСЛАВИ ХУШШИНЧИ СЫХАНУСЕМ

БЕЛГРАД, майăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: икĕ çĕршыв хушшинчи сыхăнăва тата яланхи туслăха çирĕплетес шутпа Франции Белградри миссине тата Югославии Парижри миссине посольствăсен шутне куçармалла тунă, тенĕ.

КĔСКЕН

▲ Американецсем Австри çĕрĕнче венгер нацисчĕсен руководительне Баша тытса хупнă. Çав Баш 1938 çултан пуçласа Венгерире пурăнакан немĕçсене ертсе пынă. Çав организацин членĕсем нумайĕшĕ эсэсовецсен отрячĕсенче тăнă.

▲ Францире Монпелье хулинче Виширн милици пуçлăхĕсем пулнă 5 çынна персе пăрахнă. Вĕсемпе пĕрле ĕçленĕ икĕ çынна, персе пăрахасран хăтарса, каторгăллă ĕçе янă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерер

Аслă Сталин кăçалхи Майăн 1-мĕшĕнчи приказра Совет государствин вăй-хăватне татах та ӳстерме, вăрçă кунĕ сурансене хăвăртрах тӳрлетме чĕнсе калани сине ответлесе, пирĕн ĕçсынни сем Тăван çĕршыва пур енĕпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Правительство Государствăн Тăвăтăмĕш Военнăй Заемне кăларнине ĕçсынни сем хапăл туса кĕтсе илчĕç. Çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕç пирĕн Тăван çĕршывра вăйлăн сарăлса кайрĕ. 25 миллиард тенкĕлĕх кăларнă заема Совет Союзĕпе çакăр кун хушшинчех 26 миллиард та 384 миллион та 685 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă.

Вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш заема çырăнса илес ĕçе пирĕн республикăри колхозсемпе ĕçсынни сем те активлăн хутшăнчĕç. Республикăра çĕнĕ заема пурĕ 139 634.000 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Çака вăл бюджетпа пăхăнни 101,9 процентчĕ пулать.

Рабочисемпе служащисем хушшинче заем сарăмĕ Шупашкарпа Канаш хулисенче уйрăмах ăнăçлăн иртрĕ. Çак хулаенчи ĕçсынни сем заема малтанхи кунах бюджетпа палăртнă чухлĕ çырăнса илнĕ. Иккĕмĕш кунхине вара заем çырăнса илес ĕçе кунти ĕçсынни сем пурте теçĕ пекех хутшăннă. Шупашкар хулинчи ĕçсынни сем хушшинче заема бюджетпа пăхнинчен ирттерсе 1.718.000 тенкĕ, Канаш хулинче—876.000 тенкĕ сарнă.

Заема фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекенсем нумай çырăннă. Сăмахран, Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ заема уйăхри ĕç укçи фончĕн 147 процентĕ чухлĕ çырăннă. Завод директорĕ Поздняков юлташ, унăн помощникĕсем тата цех начальникĕсем заема икĕ уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнма кăмăл тунă.

Государство заемĕсене çырăнса илес ĕçре ялти активистсем çулсеренех пример кăтартаççĕ. Кăçал та чылай колхоз председателĕсем, бригадирсем тата ытти работниксем заем çырăнса государствăна 5-шер, 10-шар пин тенкĕ кивçен пачĕç. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ кăçалхи заема 10.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳленĕ. Çак колхозри Пикшеев, Гамалетдинов, Дунгатуллин тата Салахеев колхозниксем 6-шар пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине хыççăнах парса татнă. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Мартынов юлташ та заема 8.000 тенкĕлĕх çырăнса илнĕ.

Заем çырăнса илесси Отечественнăй вăрçă чарăннă хыççăн татах та вăйланчĕ. Чылай колхозниксемпе колхозницăсем, вăрçă пĕтнипе савăнса, заема хушса çырăннă. Тĕслĕхрен, Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ 75 çулхи старик Илья Кузьмин, уйăр ĕçĕн пахалăх инспекторĕ пулса ĕçлекенскер, Çĕнтерӳ Кунĕнче пулнă митингра çапла каланă:

— Çĕнĕ заем тухсанах, Çĕнтерӳ кунне сыхăртас тесе, эпĕ ăна 1000 тенкĕлĕх çырăнтăм. Паян эпир çав кунз уявлатпăр. Пирĕн чĕресем савăнăçпа тулнă. Савăннипе эпĕ тата 1000 тенкĕлĕх çырăнатăп,—тенĕ.

Ялсенче заема çырăннипе пĕрлех укçине пухасси те сарăлса кайрĕ. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне заем укçине колхозниксемпе единоличниксенчен 41.749.000 тенкĕ, колхозсенчен 6.418.000 тенкĕ, пĕтĕмпе 48.167.000 тенкĕ пухнă.

Заем укçи пухас тĕлĕшпе Чурачăк районĕ мала тухрĕ. Майăн 23-мĕшĕ тĕлне кунта заем укçине пĕтĕмпех пухса çитерчĕç. Ун хыççăн Муркаш районĕ пырать. Кунта пурĕ 2.914.000 тенкĕ (заема сарнин 92,4 процентчĕ чухлĕ) пухнă. Укçа пухас тĕлĕшпе Вăрмар, Куславкка, Вăрнар, Красноармейски, Тăвай, Октябрьски тата Калинино районĕсем те лайăх ĕçлеççĕ. Малта пыракан районсенчи колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем çитес вăхăтрах заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татасса шанма пулать. Мĕншĕн тесен, унти партипе совет руководителĕсем, финанс работникĕсем заем укçине пухас ĕçре ĕçсыннисен хальхи вăхăтри çĕкленĕвĕне лайăх усă кураççĕ.

Анчах та республикăра заем укçине пухас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлекен районсем те пур-ха. Ку енĕпе чи малтанах Первомайски районне палăртмалла. Унта 95 пин тенкĕ кăна пухнă. Çакă вăл заема сарнин 5 процентчĕ çеç пулать. Заем укçи пухас тĕлĕшпе Йĕпреç, Шăмăршă, Кувакино, Элĕк, Улатăр, Комсомольски, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай тата Пăрачкав районĕсем те юлса пыраççĕ. Ку районсенче заем укçине 5—20 процент чухлĕ çеç пухнă. Юлса пыракан районсенчи партипе совет организацисен руководителĕсем, финанс работникĕсем заем укçине вăхăтра пухма кирли çинчен колхозниксене ăнлантарса памаççĕ, çак ĕçе республика юбилейне хатĕрленессипе çыхăнтармаççĕ. Унти руководительсем: «Заем сарма чарнă, çапла вара заем ĕçĕ пĕтнĕ. Укçи вăл хăех пухăнать», тесе шутлаççĕ пулмалла. Çавăнпа вĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ.

Юлса пыракан районсенчи исполкомсен председателĕсем, финанс отделĕсен заведующийĕсем заем сарнин пĕтĕм сумминчен 25 процентчĕ районпа ял Советсен бюджетне юлни çинчен лайăх пĕлеççĕ. Сапах та вĕсем çавăн чухлĕ укçана район бюджетĕнче хăварнине ăнлантарса памаççĕ, çак ĕçе республика юбилейне хатĕрленессипе çыхăнтармаççĕ. Унти руководительсем: «Заем сарма чарнă, çапла вара заем ĕçĕ пĕтнĕ. Укçи вăл хăех пухăнать», тесе шутлаççĕ пулмалла. Çавăнпа вĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ.

Юлса пыракан районсенчи исполкомсен председателĕсем, финанс отделĕсен заведующийĕсем заем сарнин пĕтĕм сумминчен 25 процентчĕ районпа ял Советсен бюджетне юлни çинчен лайăх пĕлеççĕ. Сапах та вĕсем çавăн чухлĕ укçана район бюджетĕнче хăварнине ăнлантарса памаççĕ, çак ĕçе республика юбилейне хатĕрленессипе çыхăнтармаççĕ. Унти руководительсем: «Заем сарма чарнă, çапла вара заем ĕçĕ пĕтнĕ. Укçи вăл хăех пухăнать», тесе шутлаççĕ пулмалла. Çавăнпа вĕсем заем укçине пухас тĕлĕшпе нимех те тумаççĕ.

Районсенчи хăшпĕр финанс лайăсен работникĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕç юлса пынине ытти ĕçсем нумайăшпе, çуракинче ытларах ĕçленипе ăнлантарса памăшăçĕ. Ку пачах та тĕрĕс мар. Ана малта пыракан районсем пур ĕçре те ĕлкĕрсе пыни кăтартса парать. Апла пулсан, мĕншĕн-ха Муркашпа Чурачăк районĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре юлса пыраççĕ? Мĕншĕн тесен, вăл районсенче пур ĕçе те вăхăтра туса пыма пĕлеççĕ. Майăн 16-мĕшĕ тĕлне налог пухмалли плана Муркаш районĕнче—73,5 процент, Чурачăк районĕнче—56,4 процент, Шăхасан районĕнче—75,4 процент тултарнă.

Улатăр, Комсомольски, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Первомайски, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă, Çĕмĕрле, Етĕрне тата ытти хăшпĕр районсенче укçа-тенкĕ пухас ĕçе начар ертсе пыраççĕ. Вăл районсем çĕнĕ заема та кирлĕ пек сармарĕç, халĕ укçине пухас тĕлĕшпе те сӳрĕк ĕçлеççĕ, ытти тӳлевсем енĕпе те унта пăрăмсем нумай.

Çĕнĕ заема ăнăçлăн вырнаçтарнă Вăрнар, Калинино, Октябрьски, Советски, Вăрмар районĕсем тата Çĕмĕрле хули те налог укçине пухас ĕçе вăйсăрлатрĕç. Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăраха хăварса пыма, паллах, юрамасть.

Чăваш халăхĕн уявĕччен—республика 25 çул тултариччен—шутлă кунсем юлчĕç. Республикăри финанс работникĕсен çакна манма юрамасть: финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕнче Ц-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана пур тӳлевсем енĕпе те июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарма, мĕнпур парăмсене пухса пĕтерме пулнăччĕ. Панă сăмах хут çинче ан юлтăр, ăна пурнăçа кĕртĕр!

И. ЗОЛОТНИКОВ.
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—28, парти пурнăç пайĕн 3—92, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00601

Типография ... полиграфпромышленности при СНК ЧАСС... 16.000